К С(чув)
Е 52
984.чув



# Ефрем Еллиев

# Суйласа илнисем

## ХАПХА

Пуçтарать уй хапхи юплĕ-юхлĕ çулсен юхăмне, тăвăнтарать, пĕрлештерет вĕсене вăл хăйĕн умĕнче; унтан ирĕке кăларса пĕрхĕнтерет урамсене, тăкăрлăксене, хапха умĕсене.

Мухтаннă пек хăй вăйĕпе, палăртман савăнăçпа куçлать уй хапхи çулсен юхăмне: чăмăртать, пăвать, унтан каллех сарать юхăм, юхăм...

Çĕнĕ-ха вăл юман юпасем... Лараççĕ тĕреклĕ, хускалас пек мар. Икĕ юпа, юпа тăрринче кашта, айккисенче вĕрлĕк карта; те кăçал çеç юсанă: пĕри те ӳкмен...

Хапхаран кĕрсен пуçланать икĕ урам: пĕри—Чиркӳ касси — хитре, тимĕр витнĕ çуртсем, кирпĕч кладовойсем, тĕрлĕ хапхасем курăнаççĕ унта. Çулĕ те унта, хапхаран тухсан, такăртарах, якарах... Сулахай енче — хире перĕнсех пуçланать — Йĕмсĕр касă. Ахалех йĕмсĕр темен пуль кассине те. Унта лутра пĕчĕк пӳртсем, чăх йăви пек хуралтăсем, тăйлăк-тайлăк хапхасем... Çулĕ те, унта пăрăнса кĕрекенни, якалман та, çеремне те таптатман. Сахал çын çӳрет вăл çулпала. Çӳрессе те халь кăна çӳре пуçларĕç-ха. Пуринчен ытла çӳреççĕ «колхозсем»: вĕсен вити çав урам вĕçĕнче. Ĕлĕксенче, çав касра пурăнакан «йĕмсĕр» чухăнсем те, çаврăнăç туса та пулин, Чиркӳ кассине кайса, тăкăрлăкпа хăйсен килĕсене кĕретчĕç.

Çавсене, тата ыттисене те: нумай çын, тĕрлĕ сăн курать уй хапхи кун каçиччен. Курать вăл хăш чухне телейлĕ этем: хирти ĕçне пĕтерсе савăнса таврăнакана. Йăпатса ун чух кĕртет вăл тутлă ĕмĕт. Çăмăл шухăш этемĕн ун чух вĕçет — кайăк тейĕн; йăпăртатать, савать, иртет хăвăрт, сисĕнкĕсĕр... Сĕтеклĕ канăç, ырă ывăну туять ун чухне этем. Паллă мар савăнăç, тĕтреллĕ хĕпĕртӳ хуллен хăпарать кăкăрта, сарăлать шăнăр тăрăх, çемçетет ывăннă ӳт-тире. Пурте йăпатать ун чухне: кил канăçĕ, кĕтнĕ апат сĕтекĕ, пуç çинчен кайнă ĕç, çамрăк арăм ăшă сăмахĕ... Пурте ырă, пурте çăмăл... Ун пеккисене сахал ĕнтĕ курать уй хапхи. Пĕр колхоз, колхоз шавлă йышĕ çеç халь кĕрет хапхаран савăнăçлă. Вĕçĕмсĕр кулу, шӳт сăмах, хуйхăсăр шухăш, паллă ĕмĕт курать хапха колхоз йышĕ кĕнĕ чух.

Ыттисем, пĕчченлисем, хапхи витĕр тухаççĕ-кĕреççĕ... Пĕрин пичĕ çинче те çук лăпкă шухăш. Пурин пуçне те хĕснĕ йăвăр шухăш: пуçĕнче те, куран, сӳтĕлет хуллен вĕççĕр шухăш тĕвви.

* * *

...Катаран хапха еннелле кусать урапа. Тăсăлать хыççăн шерепеллĕ тусан; пĕтĕрĕнсе, явăнса шăвать вăл çĕлен пек таçта инçетре, айлăм хыçĕнче хӳрине çухатса.

Çатăртатать урапа, тăсать çак çул пекех вĕççĕр, сăрăлтатакан, чуна çупăрлакан кĕвве. Тĕнĕл çухăрать хăврăлса (тикĕт тивмен), ӳречепе кӳпчек, çынна çиекен икĕ арăм пек, çухăраççĕ калама çук йăлăхтарса, тĕмсĕлекен, тарăхакан ăша тăвăрлатса. Те урапа кĕрлесе тĕлĕртнипе

(йăвăр, йăвăр, чее ыйхă!), те ланчашка шухăш арканнипе çамрăк хуçапа ватă лаша пуçсене лаштах уснă.

Çӳлте, тӳпере, йăваланаççĕ лăпсăркка пĕлĕтсем. Чăн тӳпине çитсен, вĕсем кĕпĕрленсе тăрсан, çĕре сăнанă пек, пĕр тапхăр чарăнаççĕ; унтан, шурă кăпăш-кăпăш чăмăрккасем евĕр кусса ансан, ирĕлеççĕ ерипен таткаланса, пĕчĕккĕн тĕпренеççĕ.

Анакан хĕвелĕн хăнчăр куçĕ тăрăхласа пăхать вĕсем шунине. Пĕлĕтсем ун çутипе шăранса, ӳкме мел шыранă пек, явăнса çӳреççĕ çĕр тăрăх; хăш чух капланса шур ункăпа çыхаççĕ хире, хăш чух шĕвелсе сĕт хăйми пек чĕтренеççĕ çӳлте.

Хĕвеланăç енчен тапхăр-тапхăр çĕкленет çепĕç çил, таять уйра ларакан тăлăх йывăççене, варкăштарать хыт суха çинчи мăянсене, армутисене... Унтан тытăнаççĕ хĕвĕшме пĕлĕтсем, хĕвĕшеççĕ мăнкăмăллăн, çĕре курмасăр, палламасăр.

Кăмăлсăрланать ăна курса çĕр пичĕ те... Ахăртнех, кĕтет вăл ырлăхне: çăмăр, нӳр... Кĕтет тилмĕрсе, йăлăнса, анчах кĕтни кăлăх. Ăна астумаççĕ çăмăлкка пĕлĕтсем. Юхаççĕ, юхаççĕ таçта... Пĕр хĕвел çеç тĕлленĕ çĕр питне: шăрататать ăна хĕрӳ çутипе. Шăрăх, тăкăс, сухăрлă... Кирек ăçта та: пĕлĕтре те, çĕрте те сисĕнет туртăнса хиврĕлни, теме хатĕрленни; темле йывăр, сасăсăр кĕрешӳ. Ахăртнех мĕн те пулсан пулмалла: е çăмăр, е пăр.

* * *

Çав пĕлĕтсем пекех çаплах тăкăс, çаплах йывăррăн хĕвĕшеççĕ Пракки пуçĕнче пăтăрмахлă шухăшсем. Хĕвĕшеççĕ пĕр татти-сыпписĕр, пуçа ыраттарса, кăкăра тăвăнтарса. Лаши ун тахçанах хуçи пуррине маннă: пырать хăй мехелĕпе, аран-аран урисене хускатса. Те унăн та хăйĕн шухăшĕсем пур, те сиснĕ вăл хуçи шухăшне, çавăнпа чăрмантарасшăн мар.

Шухăш çине шухăш пусать Праккине, шухăшсем те мар, темле сыпăклă мĕлкесем — иртнин касăкĕсем, хальхин татăкĕсем — таçтан сиксе тухса уçăлаççĕ йăмăх кăвак хуппи пек.

Шухăш çине шухăш пусать Праккине, шухăшсем лапчăтаççĕ, пăчăртаççĕ пĕр-пĕрне: хăш чух сисмесĕрех çăварĕнчен тухать тăхлан тумламĕ пек йывăр сăмах:

— Мĕнле? Мĕн тăвас-ха? Мĕн?..

Те çул сиктерми силлет, пăсать шухăш йĕркине, те çитет вĕçĕ пĕр-пĕр шиклĕ тĕле (пăрăнасшăн унтан çаврăнса), темшĕн, анчах çухалать вĕçĕ пуçра; халь тухнă сăмах та янрать урăх çын сăмахĕ пек, янрать таçта аякра.

Кусать урапа сиктерсе. Вĕçĕмсĕр тăсăлать тусанлă çул. Пĕр йăмăхмасăр пăхать сар хĕвел, ним астумасăр сăнать куç таврана.

Юлать тĕм, татах тĕм, мăян, хытхура... Куç тĕлне çавсем çеç лекеççĕ. Армути. Суптăрканă аскăн япала: хăй пĕвĕнчен вăтанать. Акă таять вăл пуçне, илĕртет аскăн арăм пекех.

Мĕншĕн сăнать-ха куç? Акă сарлака армути, тĕпĕнченех турат... Пурĕпĕрех тепре иртнĕ чух паллас çук вĕт пĕрне те...

Пракки юри пĕрне сăнаса, çаврăнса ăсатсах ярать, куç тепĕр тĕме тĕл пуличченех. Вăл та иртет, унтан — тепри... Асне илесшĕн юриех малтанхине: «Мĕнлеччĕха?» Çук. Пăтранса каять куç умĕнчипе.

— Е-е-е... Мĕн чухлĕ курнă вĕсене паян, ĕнер, кăçал, пĕлтĕр, ĕлĕк, урăх çĕрсенче... Пĕрне те пулсан астăватăн-и-ха?

Урапа куссипе кусать Пракки шухăшĕ. Такăнса, вылянса кусать каялла, иртнĕ йĕрпеле. Кусать; пуç — ун лаши; чĕре — ун çулĕ.

...Акă инçетри хир... Унта та кунти пекех мăянсем, армутисемччĕ... Аякра вăрман... Куç умĕнче хĕрлĕ çыран. Çӳллĕ вăл, çӳллĕ. Çĕлĕк ӳкмелле. Темле курăк сыраннă чăнкă çырана (мĕнле вара ӳсет-ха çара тăм çинче?). Тĕпĕнче пĕр мăян, йĕнĕ çын пек, чикнĕ пуçне, хуçăлнă... Турачĕ çинчен сăтăрăлнă çулçи, астăвать çыпçăннăччĕ вăл этем вилли çине.

Вилĕ выртать чикеленме пикеннĕ пек. Урисем çӳлте— çырана перĕннĕ; аллисем хыçалта, вĕсене хытă туртса çыхнă.

Астăвать Пракки. Ах, епле вăл лайăх астăвать. Урисем çара... Çара мар — тирсĕр, çутă хĕрлĕ аш... Хытнă, куштăрканă. Чĕркуççи сыппине, туна сыппине, пӳрнисен сыппине — пурне те сыпăланă, силленсе тăраççĕ. Пуçне чĕркенĕ... Астăвать Пракки... Ах, епле вăл лайăх астăвать... Чĕркенине чĕтрекен аллисем ун салтрĕç. Салтсан...

Пракки шăлне çыртрĕ. Шăнăр пит-куçа ыраттарса

туртрĕ. Витре пăрлă шыв чĕтретрĕ çурăма, хаяррăн çӳçентерчĕ.

— Н-н-на. Атя... Ут,— хăвалать вăл сасартăк лашине. Пăрас килет, куçарас, татас килет сивлек шухăша. Манас килет.

— Атя, ут. Ак çитетпĕр киле... Арăм унта... кĕтет. Пĕчĕк Лисук «атте килет» тесе чӳречерен пăхать пуль.

Çук çав. Акă, акă юри кӳртнĕ шухăш тĕссĕрленет, сирĕлет. Татăлман астăву пахмăтланса, сĕкĕнсе чупать малалла. Кӳрет куç умне çĕнĕрен çĕнĕ тĕслĕхсем, çĕнĕрен çĕнĕ сăнлăхсем. Чарма çук-çке, чарма çук.

Акă тискер виле, татăлнă сыпă, сӳнĕ ӳт... Акă çывăх, çывăх. Вăл умра пекех. Халь куран ĕç пекех.

Астăвать Пракки. Ах, епле лайăх астăвать. Çӳçне сӳнĕ виленне; йăлтăртататать шакла пуç тӳпинче юнлă хура шăтăк. Елпĕрсе кайнă, çумне хытнă авкаланса сарă çӳç пĕрчи. Çамки çинче, шăмă курăнакан çамки çинче, çутăлать персе кӳртнĕ хĕрлĕ çăлтăр. Ун йĕри-тавра пăчăртатса тухнă сарă япала: те миме, те юн? Йăлтăрать вăл тискер, йăлтăрать вăл хаяр, йăлтăрать юнлă ӳт хушшинче юн кĕтсе йăлтранă пекех.

Кусать урапа сиктерсе, силлесе... Тумхах. Шакăлт! сикет урапа, чăрк! тăвать тĕнĕл. Тумхах — шухăш та татăлчĕ. Татăлчĕ астуни, вупăр пуснă хыççăнхи пекех йывăр чул хăварчĕ пуç çине. Ăш урлă, чĕре витĕр, пĕтĕм ӳт тăрăх сăрăлтатса иртрĕ кичемименӳ: пăрлă сивĕ çапрĕ кăкăра; сивĕ тар пăчăртатса тухрĕ çурăмран.

...— Кам вĕлернĕ? Мĕншĕн вĕлернĕ? Мĕншĕн хĕрлĕ çăлтăр? Мĕншĕн сӳнĕ тир?— ыйтнă Пракки, астăвать, ыйтнă вăл хĕвелтен, иртсе каякан çилтен... Çук. Никам та ун чух каласа парайман. Çил çаплах уланă, хĕвелĕ те çаплах хĕртнĕ. Пурте вĕсем тертленсе вилнĕ ятсăр çынна маннă. Мĕншĕн тискерлĕх? Е этем тискер кайăкран та хăрушă-и? Тискер кайăк вĕт апла тăвас çук.— Çапла ыйтнă, астăвать Пракки, лăпкă тĕнчерен. Темшĕн, шел те пулман салтакĕ. Вăл вилнĕ. Пысăк асаппа-и, пĕчĕк тертпе-и?— пурпĕрех пĕр вĕç. Çук. Урăххи. Çӳçентерне çын çавна тума пултарни, чĕтретнĕ чикĕсĕр тискерлĕх.

Акă татах армути... Акă татах мăян... Иртеççĕ, иртеççĕ вĕсем вĕçĕмсĕр... Лешне, паçăрхине, астăвас çук вĕт пурпĕрех. Лешĕ, çыран хĕрринчи, мĕншĕн асран каймасть-ха?

Хěвел чылай аннă. Тӳпери пěлěт, хурланнă хěр куçě пек, тěксěмленчě хуллен, хуллен. Антарчě куç харшине, вăтантарнă хěр — çěнě çын пек: вăрттăн çеç куç хӳрипе пăхать. Аякри вăрман та чарăнчě шавлама, çил те кěчě йăвине. Пурте тăп пулчěç. Хěвел анас умěн çеç çакăн пек вăхăт пулать.

Çул пăрăнчě. Тарăн вара кěрет. Ав лăпсăркка хурама, çирěклěх... Ун хушшинче шăнкăртатать пěчěк çырма... Хăяхлăх. Ак, ку вěт хамăр çěр, хамăр ял хирě. Часах акă кил, ăшă пӳрт, яшка... Лисук акă чупса тухать урама. Леш вилли вěт вăл Çěпěрте, 18-мěш çулта, Колчакпа çапăçнă чухне пулнă.

...Пěлнě кайран, çывăхри ялта каласа панă: пěр хěрлě салтака илнě пулнă тыткăна хусахсем; хěненě, тирне сӳнě чěрěллех, сыпписене каснă çухăрнă çěртех, куçне чиксе шăтарнă сивě штыкпа; унтан суранлă, тирсěр çамкана шăтăк туса хěрлě çăлтăр çапса кӳртнě, вара, ун пуçне табак хутаççи тăхăнтарса (ун чухне вилмен-ха вăл!), ăна çӳллě ту çинчен тěртсе янă. Асапланнă мěскěн табакпа чыхăнса, вăлах тата каснă пуль суранлă ӳте. Мěскěн хěрлě салтак. Тен, вăл чăвашах пулнă-тăр. Тен, унăн савни пур-тăр ялта. Мěн калěччě-ши вăл ăна курнă пулсан?

Анланнă вара Пракки. Анланнă этем тискерлěхне. Класс кěрешěвě тенине тин чěрепе туйма пуçланă. Пракки тин кура пуçланă класс тăшманне: ун ěмěтне, шанчăкне, шухăшне. Çавăнпа пуль халь те, тăп пынă çěртех, сасартăк вěçерěнет çăвартан:

— Çапла пирěн пеккисене.

Хир, çул, мăян. Каллех хир, каллех çул, каллех мăян... Халь армутисем те таçта çухалчěç. Йывăç та çук. Инçетре çеç сӳнекен хěвел ыталать çěр питне юлашки хěрӳпе. Сарăлать тěнчене çемçе, чечен хурлăх. Чечен çутăпа çемçелет тăрă сывлăш та, кăвак хир те, тěксěм вăрман та... Уçăрах илтěнет шăрчăк сасси.

Ăшăнса сӳтěлет çăмха — иртнě пурнăç. Пăркаланса, пăтранса тин уçăлан çырма пек, пěрре — чакса, тепре иртсе юхать шухăш юхăмě: астăвăнать иртни:

Астăвăнать каллех ютри çěршыв. Вăрман. Çӳллě çӳллě яштака йывăçсем. Кӳлě. Пысăк, тарăн, тăрă... Тулли куç пек. Çеçенхирсем. Ăс пекех сарлака, тěнче пекех чикěсěр, тинěс пекех яка...

Акă вăл ыткăнать мала. Ыткăнмасть — чăмать, çиле

çурать. Пĕлместĕн: те утна хистетĕн, те ху вĕçетĕн. Ӳте туйми çăмăллăх. Пуçа çавăракан тивлет. Вăл пурнăçчĕ.

Астăвать Пракки. Пит лайăх астăвать. Акă ӳкнĕ офицер... Вăрман, кӳлĕ хĕрри. Халь те асра офицер пакунĕ: çутă, кĕмĕл укаллă... Йăлăнать, пуççапать, авкаланать çĕлен пек. Кĕтет хĕрхенӳ. Çук çав хĕрхенӳ. Астутарсах, аллине тăсса тăнă пекех, «çакă мана вĕлерекен» тенĕ пекех, куç умĕнче тăрать тирне сӳнĕ хĕрлĕ салтак. Епле итлес мар тăван сăмахне? Çук. Хĕрхенмен вăл никама та...

Астăвать Пракки. Пит лайăх астăвать. Акă хурчăка пек хăвалать хусаха... Çеçенхир. Пĕр тĕм те çук. Çитет. Шăтарать, тилмĕрет пысăк шенкер куç. Йăлăнать: «Пар пурăнма!» Çук çав хĕрхенӳ. Астутарсах, аллине тăсса тăнă пекех, «эпĕ те йăлăнтăм, вĕсем итлемерĕç» тенĕ пекех, куç умĕнче выртать куçне шăтарнă хĕрлĕ салтак. Çук. Хĕрхенмен никам та.

Астăвать Пракки. Пит лайăх астăвать. Нумай çĕрте: вăрманта, ялта, çеçенхирте, тусем хушшинче... шеллемен вăл пĕр тăшмана та. Чăнах, пулатчĕ вăхăт: алсем çемçелетчĕç, иккĕленетчĕç... Çĕкленме пăрахатчĕç. Анчах, çавăнтах, аллине тăсса тăнă пекех: «Юлташăм! пире те вĕсем шеллемеççĕ»... тенĕ пекех, куç умĕнче тăрать çамки çине çапса кӳртнĕ хĕрле çăлтăрлă коммунар. Çук. Хĕрхенмен никама та...

* * *

Çапла. Вăл ĕлĕк. Халĕ вара? Халĕ мĕнле-ха эпĕ? Сасартăк каллех вĕçерĕнчĕ чĕлхерен. Именчĕ хăй те тахши илтесрен. Çаврăнса пăхрĕ. Вăрăммăн сывларĕ.

— Но-о-о. Атя. Ут! Час киле çитетпĕр. Лисук кĕтет пуль ĕнтĕ,— тет вăл тилхепине тустарса. Лаши иккĕвиççĕ хăвăрттăн ярса пусать те каллех ĕлĕкхи йĕркепех утма пуçлать.

Татах тăсăлать тайлăк çул, татах курăнкала пуçларĕç армутисем. Татах хутран-ситрен тĕл пулать мăян. Анакан хĕвел умĕнче чĕтрет каçхи сывлăш. Ял енчен кунталла вĕçет пĕр кайăк.

— Ăçта вĕçет-ха хăй пĕччен?— сасартăк тĕлĕнет Пракки.— Пур-ши пуçĕнче шухăш? Е пĕр шухăшсăрахши? Хам ăçта вĕçетĕп?— ăнсăртран танлаштарать вăл хăйне кайăкпа.— Пур-и пуçра шухăш? Епле-ха апла пулса тăчĕ? Епле çын хыçне тăрса юлтăм?

Каллех сӳтӗлет ҫӑмха: иртнӗ пурнӑҫ.

...Вӑрҫӑран таврӑннӑ ҫӗтӗк йӗмпе, ҫӗтӗк ҫӗре. Савса хапӑл турӗ хӑнчӑр, лутра тайлӑк пӳрт. Лашасӑр, ӗнесӗр, арӑмсӑр... Кам-ха ӑна ҫын вырӑнне хисеплет? Мӗн чухлӗ мӑшкӑл, кулу, тарӑху, астуса-астумасӑр, хурланса-хурланмасӑр иртгерсе янӑ ҫын ӑшне кӗриччен. Мӗн чухлӗ, чун ыратсан та, пилӗк авӑннӑ пуян умӗнче. Астӑвать Пракки... Епле астумастӑн-ха ӑна? Акӑ Ивантей Мӗтри. Кулак. Сахал-и ӗҫленӗ унӑнне? Лашашӑн ӗҫленӗ. Лаша пулман. Епле чӗре ыратман хӗрлӗ салтакӑн ҫын ӗҫӗнче? Чӗре ыратнӑ. Ах, епле ыратнӑ. Анчах тӳснӗ.

Астӑвать Пракки. Епле астумастӑн-ха ӑна? Акӑ куштан Тимакки. Сахал-и тарӑхнӑ унпа? Анасем юнашарччӗ. Ана пуҫӗсем иккӗшӗ те тӗрӗсчӗ, виҫеллӗччӗ: чӑркӑшма сӑлтав та ҫук. Варринче вара пӗр хӑлаҫ манӑнни еннелле кукӑрӑлса кӗретчӗ. Шарт авӑнчӑклӑ, пӗкӗ пекех. Епле чӗре ыратман хӗрлӗ салтакӑн ҫын мӑшкӑлӗпе? Чӗре ыратнӑ. Ах, епле ыратнӑ. Ҫапах каламан вӗт. Вӑтаннӑ. Тӳснӗ...

Унтан... Ҫулсем иртрӗҫ. Ҫулсем куҫрӗҫ урапалла. Ҫулсем улӑштарчӗҫ кунсене. Инҫетрен, хуларан, ыткӑнса килчӗҫ яла пӗлӗмлӗх татӑкӗсем:— культурлӑ хуҫалӑх. Нумай уйлӑ хир. Ыткӑнса ҫитрӗҫ те хӗсӗнчӗҫ сарӑлма ирӗк пулмасӑр... Нумай ҫӑвар чӑмланӑ, перосем чӗртерсе якатнӑ сӑмахсем ҫакӑнчӗҫ сывлӑша:

— Ҫӗнетӗр ҫӗр ӗҫне...
Туянӑр ӑратлӑ выльӑх...
Вӗренӗр культурлӑ пурӑнма...

Астӑвать Пракки. Халь те лайӑх астӑвать. Ҫынсем ӗненместчӗҫ, кулатчӗҫ вӑл сӑмахсенчен. Пӗр Пракки кӑна шухӑша кайрӗ.

Астӑвать Пракки. Халь те лайӑх астӑвать. Епле вӑл чӑмнӑ пуҫӗпех ӗҫе. Вӑрҫӑ чухнехи хастарлӑх, хӑюлӑх каллех ҫавӑрса илнӗ ӑна. Вӑрҫӑра ҫӗнтернӗ пекех, кунта та вӑл ҫӗнтернӗ. Акӑ район выставки. Ӑратлӑ, пысӑк, илемлӗ сысна. Таврара пӗртен-пӗр. Ун пек сыснана «манӑн» теме те кӑмӑллӑ. Астӑвать: хӗрӳленнӗ агроном тем калаҫать, ӑнланма ҫук. Анчах куҫӗсем саваҫҫӗ Праккие ӑшшӑн, ӑшшӑн... Унтан кайрӗ вара пурнӑҫ ӑннӑҫем ӑнса. Сысни ҫӑвӑрласан — вуннӑ-вунпилӗк; сурӑх пӑранласан — йӗкӗреш, тырӑ ӗлкӗрсен пуринчен лайӑх; кайрӗ

пурнăç хута. Çĕнĕ йĕрке, меллĕ меслет, кĕнеке çинчи ăс куçать пурнăçа хыпаланса.

Юлашкинчен çитрĕ вăхăт. Астăвать Пракки. Халь те лайăх астăвать. Пурнăç ун — мункун! Вăл хĕрлĕ кĕпепе, çутă атăпа, пултарулла пит-куçпа. Урисем те утăмсене ўкереççĕ тĕреклĕрех, çирĕпрех. Ĕлĕкхи пек мар, шанчăклă утăмсем. Пуç та тайăлма пăрахрĕ ялти «хисеплĕ» çынсене курсан (хăйсем тайччăр!).

Çынсем те вара сасартăк астурĕç. «Пракки» тесси пĕтрĕ. «Пракки хăта», «Пракки хурăнташ», «Пракки Иванчă». Чĕне пуçларĕç ĕçке, йышăнчĕç тăлăха. Лартрĕç кĕреке хушшине.

Кĕнĕ çапла çын шутне.

Çитрĕ 1929-мĕш çул. Çитрĕ те татрĕ капитализмла ĕмĕте. Çĕнĕ ĕмĕт, социализмлă ĕмĕт ун выранне кăтартрĕ.

Астăвать Пракки... Лачах ўкрĕ ун чухне кĕтни, ĕмĕтленни. Çич-сакăр çул пуçтарнă пурлăх сасартăк хакне çухатрĕ, илĕртме пăрахрĕ... Хĕрсе ташланă чух çын кулса сивĕнтернĕ пек, хĕрсе пурăннă чух та сасартăк çĕнĕ ĕç сивĕнтерчĕ. Пуçланчĕ колхоз... Ялĕпех турĕç колхоз. Унта Пракки те кĕнĕ. Унтан... Саланчĕ колхоз, çĕнĕрен пуçланчĕ колхоз. Нумайăшĕ кĕчĕç. Пракки кĕтет. Мĕн кĕтет — хăй те пĕлмест. Колхоз ураланчĕ. Пракки кĕтет. Мĕн кĕтнĕ — хăй те пĕлмест.

Çаплах вăл юлнă та юлнă. Пĕччен, айккинче... Çаплах вăл, пурнăç юхăмĕнче малтан çул суйласа пыраканскер, ыткăнса юлнă çыран хĕррине... Вĕт унта ытларах та путлăх, чĕтрекен лачака. Вĕт унта хĕрлĕ салтак тирне сўнĕ хусахсем, ăна ĕçлеттерекен Ивантейсем, вунсаккăрмĕш çулта çапăçнă тăшмансем. «Мĕнле-ха эпĕ,— темиçе хут та ыйтнă Пракки хăйĕнчен,— лекрĕм çавăнта? Е чăнах-ши: пурăнăç пăрăнăççăр пулмасть, е çĕнĕ çурхи юхăмăн чăрсăр хумĕсем пăрахрĕç-и кăларса пăхăнман татăка?.. Каларăшле, мĕне тăрать пĕр çын, çĕр çын, пин çын хастарлă юхăмшăн урлă тăни? Ниме те тăмасть. Анчах эпĕ çапăçнă вĕт-ха çакăншăн».

* * *

Хир, çул, татах хир... Хутран-ситрен мăян. Хумханать ўркенсе... Çул та хирĕçсе авкаланать. Мĕншĕн-ха авкаланчăк? Тўрĕрех кайма пултарман-шим ĕнтĕ?.. Çўлте пĕлĕтсем çаплах мăраннăн йăваланаççĕ.

Çавăн пекех, пĕлĕтпе пĕлĕт хутшăннă пекех, ӳркенсе тăсăлаççĕ шухăш татăкĕсем.

Пăтранаççĕ, пĕрлешеççĕ... Қаллех иртни, хальхи, унтан — тĕтре.

— Мĕншĕн-ха ĕмĕтĕм лăпчăнчĕ, пусăрăнчĕ. Е чиккине çитрĕ-и? Е ванса, тĕпренсе чакрĕ-и калла? Ăçта ĕлĕкхи тутлă ĕмĕт, каç выртсан çывăриччен шухăшланă шухăш. Ăçта вĕсем? Ăçта тулли савăнăç? Сурăх путек тусан та пурччĕ савăнăç. Куç умĕнчех хурçă хытти çапрĕ тĕнчене, пăрăнчĕ пурнăç çулĕ. Пушанчĕ ăшчик, çухалчĕ тĕрек, çухалчĕ те, сасартăк лештĕртетрĕç алăсем, çĕтрĕ ура вăйĕ.

Вăйлă, тискер шăлакан тăманра çеçенхирте аташсан, çийĕнчен тата çуна турти хуçăлсан, улăштарма хатĕр пулмасан, ху вилес пек шăнсан, — пĕр тапхăр ларатăн ним тăва пĕлмесĕр, шухăшна чăмăртаймасăр, алла çĕклеймесĕр. Тăман вĕçтерет, юр куçа тулать, алăсем шăннă, хатĕр турта çук, турта пăявĕ те çук... Çавăн пекех — хуçăлчĕ пурнăç турти, кивĕ, пĕччен хуçалăхлă турта. Пĕчченлĕ ĕмĕт, çухалчĕ çул, капитализм енне илсе каякан çул, кăтартрĕç çĕнĕ çул, унпа вăхăтĕнче каймарăм, халĕ аташрăм. Умра — тăманлă самана, паллă мар тĕнче.

Сапаланчĕ шухăш, вĕт пăрçа пек сиккелесе, кусса. Чарак çукран, чарăнмарĕ. Кусса кайрĕ анаталла. Унталла çăмăл кусма. Кĕрсе ӳкрĕ лачакана.

Епле йăвăр, пушă, тăвăр — кĕтнĕ шанчăк, ертекен ĕмĕт вĕçерĕнсен. Тата ытларах йăвăр — иккĕленсе тăрсан икĕ çул хушшинче.

Мĕнпе танлаштармалла хальхи вăхăта? Пуйăс пек ыткăнать вăл. Малта мĕскер? Ларнисемшĕн паллă: илемлĕ, тивлетлĕ çĕр. Ларнисем тулли кăмăллă: тупнă хăйсен вырăнне, пĕлеççĕ ăçта каймаллине, çитмеллине... Вĕсен вакунĕ — колхоз, вĕсен каяс çулĕ — социализм. Умран, айккинчен, варринчен иртет пурнăç — пуйăс хăшиншĕн. Ыйтса тăмасть ырлу, килĕшӳ — чупать малалла, хăш чух çеç сасси çĕмрĕлет — çул çинчен пăрăнма хушса. Праккишĕн те çавăн пекех.

Юлташсем, пĕрле вăрçăра çапăçнисемех, пурте колхозра. Юлташсем, ялта активист пулса тăраканнисем, пурте колхозра. Ĕмĕтлисем, совет влаçĕшĕн тăракансем, уншăн çапăçма, кĕрешме хатĕррисем — пурте колхозра. Çирĕп çыпçăнчĕç çĕр çумне колхозсем — хăпăтас çук ни-

мĕнле вăй та. Ял тĕсĕ шăранать; уйрăм çын çухатĕ ятне, чапне, ĕçне. «Çав çын» темеççĕ. Колхоз, теççĕ. «Çав» турĕ темеççĕ. Колхоз турĕ, теççĕ. Хуранта пăтраннă пек пăтранчĕ ял. Путрĕç аяла «ырă çынсем», тухрĕç çиеле ятсăррисем.

Чарăн шухăш. Ан тух сăмах. Пракки шăлне çыртрĕ. Ак чĕлхе вĕçĕнчех: «кĕлĕмçĕсем». Анчах пыра ларчĕ. Аш хирĕнчĕ ыратса, тарăхса... Ӳкĕнĕç, хăвна питлӳ, тертленӳ — тăвăрлатрĕ кăмăла: хĕсрĕ çивĕч, йĕп пек япала. Таçтан сиксе тухрĕ плакат пекех шултра, хура шухăш.

— Хама вара ĕлĕк епле хисепленĕ?

Тахши тĕкĕлесех питлет ăшра: «Пултăр-ха ĕлĕкхи вăхăт. Ан пултăр çурт, лаша, ĕне... Пулăттăм-ши эп çак хисепре? Тен, ун чухне мана та «кĕлĕмçĕ» тейĕччĕç. Пĕлесчĕ: мĕн шухăшлаттăм-ши ун чух?»

— Çав «кĕлĕмçĕ» пĕрле пуласран хăраса колхоза кĕмерĕм-и?— хăйне юри асаплантарса ыйтать Пракки.— Совет влаçĕшĕн пуçпа тăракансем пурте колхозра пулсан, эпĕ вара... Эпĕ хирĕç тăракан-и? Эпĕ пĕтме сунап-и? Мĕншĕн апла пулсан çапăçу? Мĕншĕн хĕрлĕ салтак... лере, Çĕпĕрте, этем тӳсейми асап курса вилнĕ? Çук. Апла мар. Тата çапăçма хатĕр çак Советшăн, юлашки юн тумламне те тăкма хатĕр.

«Мĕншĕн-ха апла пулсан лешсемпе пĕрле мар, колхозра мар?— ыйтать паçăрхи сасах.— Вăт, пĕрле пулманни хирĕç пыни пулать».

— Çук. Хирĕç мар,— тавлашать Пракки хăйпе.— Эпĕ кулаксемпе мар. Ĕлĕк «ятлă çынсем» çĕлĕк илни кăмăла хăпартатчĕ пулсан, халь вăл маншăн çивĕч çĕçĕ. Ярр! çурса ярать кăмăла. Чăнах çапла-тăр. Темшĕн-ха, апла мар тесен, сан çине вĕсем хăйсен эртелли çине пăхнă пекех пăхаççĕ...

Çĕркаç акă... тĕл пулчĕ Ивантей Мĕтри. Каçхине. Хĕвел ун чухне аннă. Хĕрĕнкĕрех. Курсанах куç хĕсрĕ: вăрттăн ĕçе эпĕр çеç пĕлнĕ пек. Алла туртрĕ, чăмăртарĕ:

— Мĕнле тапаçланатăн? Е тапаçланма ирĕкех памаççĕ-и?

— Пурăнатпăр-ха хуллен,— ырă маррăн туйăнчĕ, пуç та пăрăнчĕ.

— Хуллен?.. Мĕншĕн хытă пурăнмастăн-ха? Елле хушмаççĕ-и? Елле туртаççĕ-и хыçран: ан кай-ха ытла хытă, тесе.

Астăвать Пракки. Сăмахсем сăрхăна-сăрхăна кĕрессĕ хăлхаран, куçран, сăмсаран. Тулать ӳте темле йăвăр, йăвăр япала; пăтрататать кăмăла, йĕклентерет; шухăш вырăнне йăвăр пăс, йăвăр тĕтре чĕтрет пуçра; лăймака сăмахсем тĕрексĕр чĕрене чăмăртаççĕ нӳнӳлетсе...

— Вырман-ха тыррине, пуçтарман... Çапман-туман,— калаçать Ивантей,— мĕн чухлĕ тухнине пĕлеççĕ; тахçанах виççе хунă. Ман çине 150 пăт хунă. Ăна парăп ĕнтĕ, патшалăха йăвăрлăхран хăтарăп, патшалăхĕ ӳпнепитне кайсан та пĕртте макăрмăттăм та-ха. Хам вара улăм кышламалла-ши? Тултарса пар ăна тата шăп виçĕ эрне хушшинче. Те хамăн комбайн тăвас ĕнтĕ. Унсăрăн ĕлкĕрес çук. Те вĕсем кӳрсе парĕç ĕнтĕ комбайн, Пракки хăта?

Ну мĕн калăн-ха ăшу пушă пулсан? Калăн мĕн тӳр килнĕ ăна.

— Кирлĕ мартан мар çав ĕнтĕ... Кирлĕрен ыйтаççĕ...

Сăмах тухать пуклак — Пракки хăй те сисет. Çын сăмах çивĕччĕшне перĕнсе мукалнă пек. Сăмах та тупăнмасть çивĕччи.

— Аппаланаççĕ пĕрех,— çаплах хăйрать Ивантей,— те колхоза кĕччĕр теççĕ ĕнтĕ. Темĕн çав. Кĕрсе пĕтнĕ пуль кĕрес пеккисем. Юлнă ĕнтĕ унта ыттисем, хамăр йышши çынсем. Вĕсем чăтĕç. Кăшт чăтсан унта... Тем пулас та, тем килес-ха.

Астăвать Пракки. Вăтанса астăвать çав. Чĕтрерĕ вăл ун чух, «мана та хăйсен йышши çынсем шутне кӳртрĕç» терĕ хăйне, анчах нимскер те чĕнмерĕ.

Ивантей тĕллесе пăхрĕ. Унтан айккине, çын çук-и, тесе... Уçрĕ чĕлхине маннă çынна каланă пек: вăтанмарĕ, хăрамарĕ.

— Ак çапла тăвас, ача. Ялĕпех ан çапчăр тырă. Чышас хамăр тенĕ çынсене. Выçă хăвараççĕ тесен... Камăн юлас килет выçă. Пире ик енчен те усă: çапмасан — тырра кĕлтипех илейместĕ; ирĕксĕр çаптарсан — халăх пăлханма, хирĕçме пултарать. Çапла чăрманкаласа юлсан... Унтан, тен, Япони те...

Астăвать Пракки... Вăтанса астăвать çав. Хытрĕ вăл ăна илтсен, хускалайми пулчĕ. Ыратса туртăнчĕ ӳт, вăйсăр алă, халсăр ура, пушаннă шăнăр.

— Манпа?— тенĕ вăл тăвăнса,— çак влаçшăн çапăçнă çынпа?.. Çапла сăмах... Çакăнтах çитрĕм-и? Çак таранччене́х-и? Апла пулсан, маннă-им эпĕ çăлтăр çапса

кӳртнӗ хӗрлӗ салтака? Маннӑ-им? Вӗт вӑл юн ыйтатчӗ, тӑшмана тӗп тума хистетчӗ. Сутӑнчӑк! Сутӑнчӑк вӗт эпӗ...—Ӳт витӗр, чӗре ҫумӗнчен сӗртӗннӗ ирсӗр япала. Ҫӑмӑл пӑтраннӑ. Йӗксӳ килнӗ. Тарас килнӗ таҫта, таҫта, таҫта,— ҫав лӑймака сӑмаха хӑварса, курайман кулака ҫупса, питлекен шухӑша татса...

* * *

Ҫул, хир, мӑян... Вӑрман хӗрри пӗтӗмпех хуралнӑ. Пӗлӗтсем пӗтӗмпех шӗвелсе пӗтнӗ. Хӗвел анать. Хытнӑ та пӑхать вӑл тем кӗтнӗ пек. Те юлашки хут ҫӗре пӑхса юлас, тет. Хӗвел анас умӗн ҫанталӑк ытла та уҫӑ: пурте унта паллӑ, пӗр япала та пытараймӑн. Ытла та уҫӑ-ҫке ҫанталӑк. Мӗншӗн-ха этем уҫӑ мар? Мӗншӗн-ха пытарать хӑй шухӑшне, кӑмӑлне, ӗмӗтне? Тӗлӗнмелле.

— Но-о. Атя. Час ҫитетпӗр. Лисук ниҫта кайса кӗреймест-тӗр ӗнтӗ.—Пракки халь лӑпланнӑ. Темӗскер татӑлнӑ ӑшра, лӑштах кайнӑ; ӑшри ҫанталӑк та уяртнӑ. Шухӑш та тӑрӑлнӑ.

Сарӑлать умра колхоз хирӗ. Ял ҫывӑх. Тин кӑна ҫӗртме тунӑ, тӑпри хура хӑрӑм пек. Лайӑх-ҫке-ха ӗҫленӗ. Начар ӗҫлеҫҫӗ теҫҫӗ, тет вӑл тӑпра ҫине пӑхса. Сӳпӗлтетеҫҫӗ ҫав Ивантей йышшисем. Мӗн-ха начар ӗҫлемелли? Вӗсем те вӗт пирӗн пек ҫӗр ӗҫлекенсем.

Таҫта, тарӑн ҫӗрте, пуҫӑн пӗр тӑвӑр кӗтессинче, хӑйӗнчен хӑй шикленсе йӑшӑлтатрӗ хӑюсӑр шухӑш:

— Колхоза кӗрсен... Мӗн-ха чарать мана?

Тӗтре — пуҫра, куҫра... хуллен сирӗлет. Шухӑш тата пуҫне ҫӗклерех парать:

— Чӑнах кӗрсен. Кӗрсех пӑрахсан?..

Куҫ умне килсе тӑчӗ сасартӑк паллӑ сӑнлӑх: Ивантей,— ҫилӗ пытарӑннӑ, калаҫать. Ялти ҫынсем,— тӗлӗнерех, чухларах астӑваҫҫӗ, пӑхаҫҫӗ тем пулнӑ пек. Колхоз пуҫлӑхӗ ӗлӗкхи юлташ,— калаҫать мӑнкӑмӑллӑрах, вӗҫкӗнтерех: «пурӗпӗр вӗт кӗтӗн» имӗш.

Ҫавна курас килмест. Ҫавна курас килмест вӗт-ха.

Хӗвел анчӗ. Ҫапрӗ нӳрлӗ сивӗ ҫил. Канӑҫӗнче ӳт, пуҫ... Канӑҫӗнче чӗре те.. Сасартӑк йӑмӑх хӗрелсе уҫӑлчӗҫ сӑмахсем. Ӗлӗк вӗсене хӑлха айккинчен ҫеҫ шутарса янӑ.

«...Ял пурнӑҫӗ ытла та тискер, тӗксӗм, кичем... Пӗр тӗслӗ, пӗр майлӑ. Ҫиелте шӑллӑраххи... пахматраххи.

Пуянсем вĕсем, «ырă çынсем». Аялта — виçесĕр тăрăшу, виçеллĕ ĕмĕт... Виçесĕр тăрăшу — паранкăпа çăкăршăн. Мĕншĕн айăплă аялтисем? Çук вăл. Ăçта чăн телей? Ху майлă, çителĕклĕ пурăннинче. Анчах вĕт вăл сысналла. Епле чĕре çемçе, сисĕмлĕ çын ыр курса пурăнтăр «çуклăх» çумĕнче. Кашни çыртăк вĕт аса илтерет выççисене, мĕскĕнсене... Çавăнтах пĕтет, тĕтĕм пек ирĕлет хăвна ху ырлани, канлĕх пехилĕ, канăçлăх тивлечĕ. Çавăнпа-тăр çав революционерсем пурнăçне шеллемеççĕ чухăн тĕнчишĕн. Кураççĕ асапне-хĕнне, мăшкăлне. Вĕсем тутă пулмĕччĕш-ши хăйсемшĕн çеç пурăнсан. Эпĕ вара мĕн-ха? Эпĕ мĕнле вырăнта? Ман мĕн шеллемелли пур?

Сĕм вăрманта аташсан, савăнатăн тем пек кирлĕ çула тухсан: çул паллă — кĕтен тухасса çутă хĕвеллĕ çĕре. Этем мими те тĕплĕ шухăша çухатсан — сĕм вăрманах. Çăмăл, канас,— чăтлăхран тухнă пекех,— ĕмĕтлĕ йĕр ăнсăртран тупăнсан.»

Ĕмĕтлĕ йĕр тупрĕ Пракки:

— Колхозсене çавăншăн тăваççĕ те... Телейлĕ тĕнчешĕн. Епле-ха урăхла пулмалла?

Пракки сарчĕ кăкăрне. Уççăн сывларĕ. Кăкăр çинчен чул йăванчĕ, тейĕн. Тав тунă пек пулчĕ коммунистсене те:

— Вĕсем хăйсен ĕçне тăваççĕ. Тунă эпĕ пăраннă вăхăтра та. Мухтамалла вĕсене...

Çав самантрах çиçĕм пек шăратса:

— Мĕншĕн хальччен кĕмен? Мĕншĕн хăранă? Мĕн кĕтсе тăнă. Çынсем тăрăшнине пăхса? Йывăрлăхсенче имĕш сан айăпу çук. Эсĕ айккинче. Тата — ĕмĕтленмест-и кивви çаврăнасса. Ун чух вара...

Кусать урапа. Юлать тĕм, тата тĕм... Шалтăртатать урапа: халь ĕнтĕ шалтăртатать темле кăмăллă. Йăлăхтармасть. Çул вĕçĕ кукăр-макăр, шăтарать инçете.

Тр-р-р... кусать анаталла... Авăнса кĕрет. Чăнкă. Кĕпер-тĕр-ха, астуса илет Пракки. Кĕпер айккинче, çирĕклĕх ăшĕнче, шăхăрчĕ шăрчăк, тахăшне чĕнчĕ, унтан чĕтретрĕ сывлăша çăмăл, çепĕç сассипе. Ытла ырă-çке ывăннă шăмшакпа ăна итлеме.

— Кĕмелле. Кĕрес. Çитĕ. Ырă мар хама та... Йăлăнтарнă, пăхăнтаракан ача пек... Ырă мар, ырă анне умĕнче ырă мар пек.

Урапа хăпарать çӳле, сăрт çине. Тĕрмекленет лаша, ухать пуçне витĕмлĕ. Те вăй çитнине пĕлет.

— Эй, атя, атя. Ут... Ав колхозсем те таврăнаççĕ,—

пуплешет вăл лашипе. Вăшт тилхепине туртать.— Сана та çапла хӳрӳне касса ярĕç, çилхӳне касĕç... Çӳрĕн вара.

Ах, пахан, пахан туйăнать лаша. Паха-çке лаша та, тăван, унсăр нумай пурăннă çыншăн. Кичем-çке-ха картара лаша кăмăрт-кăмăрт! тутарни илтĕнсен. Тунсăх ун чух лаша тулхăрни. Кăмăлла мар витере тислĕк шăрши пулмасан; ӳсĕртет вĕт вăл хуçана эрех пекех: килтерет килйыш илемне, систерет килйыш тулăхне.

— Эй, атя, ут. Эп сана.

Кăмăл сĕвĕрĕлчĕ каллех. Паçăр ĕненнине халь шанас килмест. Тепĕр хут шухăшлас та килмест. Ни кунталла, ни лерелле. Туртăм çук. Сулăну çук.

Килĕшнĕ-килĕшмен вăхăт. Тытăннă-тытăнман тапхăр. Пушă ăшчик... Тĕтрелле пуç... Асап вĕт вăл...

* * *

Пуçтарать уй хапхи юплĕ-юплĕ çулсен юхăмне, тăвăнтарать умĕнче, пĕрлештерет...

Нумай çын, тĕрлĕ сăн каç пулсан сăнать вăл хăрах куçĕпе. Ун витĕр иртет çĕр тĕрлĕ çын, çĕр тĕрлĕ сасă тăнлать ун хăлхи.

Акă васкавлă ушкăн килет кĕрлесе. Юрă, кулу, паллă ĕмĕт, паллă пурнăç вĕсен сассинче. Паллать уй хапхи: колхоз çемйи таврăнать. Çĕнĕ кĕвĕ янрать вĕсен шавĕнче — савăнăçлă кĕвĕ. Сăнать вăл; туять ĕмĕр сыппине; вăл чухлать çĕнелнĕ тĕсе.

— Эй, пăрăнăр... çул парăр. Пăрăнăр, тенĕ...

Пăрăнаççĕ пăтранчăклă, йĕркелĕхе çухатнă уйрăм хресченĕн уйрăм лашисем. Çул параççĕ колхоза. Тĕлĕнет уй хапхи. Курать вăл — хуçăлнă пурнăç йĕрки; çĕмрĕлнĕ никĕс. Пăрăнаççĕ ĕлĕк нихçан пăрăнман çынсем. Кĕтсе тăраççĕ кĕтме юратманнисем. Кĕтеç çав. Урапа шавĕ те вĕсен хăйăл-хăйăл, йĕрке çухатса йышне тупайман хăйăлти хур сасси пек.

Паллать уй хапхи Пракки лашине те. Усăннă çĕрелле ырхан пуçĕ; пĕкĕрĕлнĕ хуçи тем шухăшпа, тем çухатнă тĕрек шыранă пек йăлтăрать хура куçĕ.

— Пăрăнăр. Мĕншĕн-ха —«пăрăнăр»? — Кулянать Пракки.— Мĕншĕн-ха кăшкăрать хушнă пек, хушма пултарнă пек? Чăнах, вăй вĕсенче, куран. Сассисем те вĕтĕ. Пăх-ха эсĕ вĕсене... Тĕнче тĕрекне пĕр вĕсем пĕлеççĕ, тейĕн. Пурнăç хуçи вĕсем, тейĕн.

Юхать те юхать халăх пĕтĕрĕнсе. Иртет лаша, иртет урапа... Вĕлкĕшет çĕлĕк, карттус, сухал... Çăтать хапха колхоз ушкăнне.

— Шаларах пăр, Ивантей пичче. Ăçта кĕрен? Çаклатан акă. Ил тенĕ лашуна, — кăшкăрать тахши колхоз ушкăнĕнчен. Çавăнтах, Пракки хыçĕнчех, хăпа пĕлмен хурт пек сĕрлет. Ивантей мăкăртатать йĕклентерсе, калăн, ырă мар, мука, пуклак япалана пăтратать Пракки ăшĕнче...

— Ăçта кĕрен? Кĕтсе тăр вĕсене... Утланнă çын лаши çине те «кĕтсе тăр». Пĕтерчĕç ĕнтĕ Тимук лашине, мĕн тĕрлĕ маттурччĕ, самăрччĕ... Пăх-ха, Пракки хăта, урасисем, урасисем. Хăйсем çапах сухăраççĕ: «тăватпăр... çĕнĕ тĕнче тăватпăр». Тăваççĕ... Пăсса пултăр. Халăхăн нумай-ха унта. Çитĕ-ха вăхăт та... Унччен ĕнтĕ çав... Тирĕсемпе, юнĕсемпе тӳлеттерĕпĕр. Çитĕ-ха вăл та... Çаплах çитет вăл.

Темĕскер татăлчĕ Пракки ăшĕнче. Хытă, кару, хивре япала çапрĕ пите, питĕрчĕ кăкăра, пăврĕ мăя... Ăшра мĕнпурĕ чарăнчĕ. Чĕре пăрахрĕ тапма: шала кайрĕ йăвăр, сасăсăр таппи; пăтранса, пăлханса тухакан вĕри сывлăш тăвăнчĕ; улталакан, йăпатакан, аташтаракан шухăш чарăнчĕ.

Çаврăнса пăхрĕ Пракки... Çиçĕм çилли, арăслан хаярлăхĕ, кашкăр тискерлĕхĕ Ивантей сăнĕнче. Пракки хăй те именчĕ. Сасартăк ăс вĕçрĕ инçете. Çĕпĕре.

Çакăн сăнлă пулнă пуль хĕрлĕ салтака вĕлернĕ хусахсем. Татах куç умне килсе тăчĕ хăрушă вилĕм: юнлă хура шăтăк пуç тӳпинче, персе кӳртнĕ хĕрлĕ çăлтăр çамки çинче.

— Мĕншĕн тискерлĕх? Е этем тискер кайăкран та хăрушă-и? — Çук. Ыйтман халь Пракки апла. Тин ăнланнă вăл тискерлĕх мĕнне... Ăçтан килнине. Çук. Халь вăл апла ыйтас çук. Çавăнпа унăн аллисем чăмăртанчĕç, çăвар уçăлчĕ.

— Ан кăшкăр пит. Кулак. Хăвăн юнна малтан ĕçĕпĕр.

...Çавăнтах çывăх, тарават, ыррăн туйăнчĕ иртекен ушкăн, хӳрине каснă лаша, çĕмрĕк урапа, хыçалти этем: йӳле пилĕк, уттисем çирĕп, калаçать юлташпа тем çинчен.

— Тăван! Тăванăм!.. Эсĕ, мĕн, тăван вĕт, — çитсе çав этеме ыталас килчĕ Праккин. — Пире революци хăймат-

лӑх турĕ, куçне сивĕ штыкпа шӑтарнӑ салтак пире: «Ĕçе вĕçне çитерĕр, тĕп тӑвӑр тӑшмана»,— тесе юнĕпе кӑшкӑрчĕ... Тӑкнӑ, тӑкӑннӑ юн çыхнӑ пире... Мĕншĕн-ха астумастӑр, курмастӑр мана? Мана мĕншĕн «кулак хӳри», тетĕр. Хӑçан пултӑм-ши кулак хӳри?.. Эй, пулнӑ та-и? Пулнӑ-и кĕтмен çĕртенех, пулас килмесĕр. Çук. Çук... Эпĕ манман хĕрлĕ салтака. Манман ун çамки çине персе кĕртнĕ çăлтӑра. Эпĕ сирĕнпе. Татах çапӑçӑпӑр-ха. Вӑрçӑра çĕнтертĕмĕр. Кулака кӑкланӑ чух та çĕнтерĕпĕр. Ытла та ырӑ-çке. Шӑнсан ӑшӑ пӳрте лекнĕ пек, çăмӑлланчĕ шӑлтах, çемçелчĕ чĕре. Ӑшра темле вӑй, илĕртекен, хистекен хӑват, тĕкĕлесех хӑвалать. Пуç çаврӑнчĕ темле телейпе. Халь ак, халь тем тума хатĕр. Чупса кĕме хатĕр правление. Ыталаса, чуптуса: «Çырӑр колхоза, çырӑр!»— теме хатĕр.

Лаши тахçанах сиснĕ хуçи манӑçнине. Колхоз иртсе пĕтсессĕнех, вĕсен хыççăнах, пуçне сулласа утрĕ. Пракки туртрĕ лашине:

— Атя. Атя. Тĕрĕс... Яра пар вĕсем хыççăн. Колхозник вĕт ĕнтĕ эпир те. Эсĕ те колхозник. Çĕнĕ колхозник пулан ĕнтĕ.

Сӑсӑ янрать йӑпанса, кĕтнĕ телей тин çитнĕ пек. Хӑвна ху килĕшнĕ чухне çеç, ӑшра тӑвӑл пулмасан кӑна — хӑвӑнпа çапла суйланатӑн.

Тӑнларĕ сасса уй хапхи. Палларĕ иртекен çынна. Савса, йӑпатса хапӑл турĕ уй хапхи. Пехиллерĕ çĕнĕ пурнӑça. Çăмӑллатрĕ. Кӳртрĕ чĕрене ĕмĕт. Шухӑша пачĕ тĕрек. Кĕрсем, кĕрсем, ырӑ çыннӑм. Пулĕ йывӑрри те, пулĕ тертли те. Ан ӳпкелеш. Куçăнтан ан çухат çитмелли тĕлне. Ун чухне çăмӑл. Ан ман тирне сӳнĕ, сыпӑкланӑ, çамкине хĕрлĕ çăлтӑр персе кĕртнĕ салтака. Вӑл сана хаярлатĕ, аташма памĕ. Ан ман: пирĕн тĕл — коммунизм патне. Пирĕн тӑшман — кулак.

Телейлĕ Пракки хапхаран иртрĕ. Хапхаран кĕрсен пуçланать икĕ урам: пĕри — Чиркӳ касси, пуян çуртсем курӑнаççĕ унта. Çулĕ те унталла якарах; тепри Йĕмсĕр касӑ, чухӑн çуртсем тӑсӑлнӑ унта. Çулĕ те унта çеремлĕ. Каймарĕ Пракки паян Чиркӳ кассипе. Яланах çавӑнтан каяканччĕ. Унталла сулӑннӑ лашиневаскаса туртрĕ.

— Атя, ӑçтан каян? Тӳрĕрен каймасӑр... Атя. Но!..

...Тĕттĕм пулчĕ... Тĕл-тĕл йӑлтӑртатрĕç хайӑ çутисем. Кӑчӑк туртрĕç ӑшшӑн-ӑшшӑн... Аташнӑ çынна тӑмантан туртнӑ пекех. Час акӑ кил. Веç, леш хӑй çути-тĕр-ха.

Киле ҫитсен арӑма калӑп. Ыран правлени. Тепӗр кун ӗҫ. Пӗрлехи ӗҫ. Татах ҫитет хӗрӳ вӑхӑт... Вӑрҫӑ чухнехи пекех...

Лаша тӑкӑрлӑкран пӑрӑнчӗ. Кил хӑй ҫути уҫҫӑнах палӑрчӗ.